25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
24
ЭРНЕКУН
96(6031) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

КОЛХОЗЛА ПУРНĂÇĂН ÇИРĔП ЗАКОНĔ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çак кунсенче «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» постановлени йышăнчĕç. Çак постановлени пирĕн колхозсене малалла тĕреклетсе пырас ĕçре, уйрăмăнах халĕ, отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Партипе правительствăн çак постановленийĕ колхозсенчи ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса ирттерме, колхозсенче пысăк тухăçлă тырпул туса илме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пыма, çапла вара колхозниксен ĕçкунĕсем тăрăх памалăх пысăкрах тупăш илме майсем туса парать. Вăл решение пурнăçа кĕртни çĕршыва Хĕрлĕ Çар валли ытларах тырпул туса илес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакă вара нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче колхозлă хресченсен тĕп задачи пулса тăрать.

Обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен 1939 çулта йышăннă минимумне (80 ĕçкунĕ) пирĕн колхозниксен пысăк пайĕ ирттерсе тултарса пырать. Пирĕн республикăра иртнĕ çулсенче гектартан çĕршер пăт ытла тырпул туса илнĕ колхозсем нумай пулчĕç. Республика пĕлтĕр кашни гектартан вăтам шутпа 13 центнер ытла тырă туса илчĕ. Çак çитĕнĕве колхозниксен масси питех те пысăк пайĕ тăрăшса, тÿрĕ кăмăлпа ĕçленине пула тунă. Колхозниксен тĕп масси обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне темиçе хут ирттерсе тултарса пырать. Çулталăкра 400—500-шер ĕçкунĕ туса ĕçлекен колхозниксем те сахал мар ĕнтĕ халĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă пирĕн колхозниксем умне çĕнĕ те пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Халĕ колхозсем нихăçанхи пек мар вăйлăн ĕçлемелле. Вĕсен пĕтĕм пурнăçĕнче дисциплина, организованность вăйлă пулмалла, колхозсенчи ĕç тухăçлăхĕ пĕрмаях ÿссе пымалла. Тăван çĕршыв çине тискер тăшман тапăнса хăрушлăх кăларса тăратнă вăхăтра ĕçлемесĕр калаçланса ларни, харпăрхăй интересĕшĕн çеç тăрăшни килĕшÿсĕр тата сиенлĕ. Кашни ĕççыннин, кашни колхозникĕн халĕ Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшас тесе пĕ- [illegible]

[illegible] Сăмахран, Чкаловски районĕнчи «Путь Ленина» колхоза кашни кунах 25—30 çын тухас вырăнне 7—8 çын çеç тухать. Бригадирсем колхоз председателĕ панă нарядсене вăхăтра пурнăçламаççĕ. Кунта кăçал пĕтĕмпе те вуншар ĕçкунĕ çеç тунă колхозниксем те тĕл пулаççĕ. Паллах, дисциплина начар çĕрте ĕçсем те çителĕксĕр пулса пыраççĕ. Колхоз çуракине халĕ те хатĕрленсе çитмен-ха.

Çак районри «Хĕрлĕ Паттăр» колхозра 1941 çулта 39 колхозник 80 ĕçкунĕ те тăвайман. А. Хураскина колхозница пĕтĕмпе те 4,84 ĕçкунĕ çеç тунă. Çавăнпа та ку колхоз кая юлса пынинчен тĕлĕнмелли сахал. Колхоз членĕсем пурте тимлĕн ĕçлесен кăна колхоз вăйлăн çĕкленсе пыма пултарать. Акă, Молотов ячĕпе тăракан колхоз пур ĕçсене те вăхăтра туса пырать. Кунта вăтă колхозниксем те пĕр ĕçрен те юлмаççĕ. Сăмахран, Ф. Зайцев колхозник кăçал 52 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ те ĕнтĕ.

Партипе правительство колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетме, ĕçрен пăрăнса юлма тăрăшакан колхозниксем тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнма хушаççĕ, мĕншĕн тесен отечественнăй вăрçă обстановки çапла тума хушать.

Пирĕн республикăри колхозниксем, партипе правительство кăтартса панă тăрăх, çулталăкра сахалтан та 120 ĕçкунĕ тумалла. Çак шутран: июнĕн 15-мĕшне çитиччен 30 ĕçкунĕнчен кая мар, июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшне çитиччен — 30 ĕçкунĕ, августăн 15-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 15-мĕшне çитиччен 40 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе илмелле, ытти 20 ĕçкунне октябрĕн 15-мĕш хыççăн тума пулать. Çапла ĕнтĕ, чи хĕрÿллĕн ĕçлемелли тапхăр вăл — çуллахи вăхăт пулса тăрать. Çав вăхăтра кашни колхозникĕн обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешес пулать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă çак паха постановлени пирĕн колхозлă пурнăçăн çирĕп законĕ пулса тăмалла. Ăна пурнăçа кĕртсе пырасси кашни колхозникĕн хисеплĕ тивĕçĕ пулмалла.

Партипе советăн вырăнсенчи организацисен çак постановлени çинчен кашни колхозникпе колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса парас пулать, вĕсене çак питех те кирлĕ решение пурнăçласа пыма мобилизацилес пулать. Халĕ республикăн хăшпĕр районĕсенче çурхи ĕçсем пуçланаççĕ, çапла вара колхоз- [illegible]

Тувин халăх республикинчи ĕççынисен делегацийĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем илсе килнĕ

Тувин халăх республикинчи ĕççынисем Хĕвеланăç фронтĕнчи боецĕсене, командирĕсене тата политработникĕсене Май уявĕпе парнелеме пĕр эшелон парне илсе килнĕ. [illegible]

Эшелон ĕнер Мускава çитнĕ. Парнесене тыркă эшелонпа пĕрле Тувин халăх делегацийĕ килнĕ, ăна Тувин республикин революцилле халăх партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Тока ертсе пырать. Делегаци составĕнче: [illegible]

Хăнасене вокзалта — Ютĕрсын Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн генеральнăй секретарĕ А. А. Соболев юлташ, Тувин халăх республикин посланникĕ Мандара, Хĕвеланăç фронтĕнчи бригадный комиссар Мазаров юлташпа пĕрле килнĕ боецсемпе командирсен группи, Ютĕрсын Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Инçети Хĕвелтухăçĕн отделĕн заведующийĕ Латышев юлташ, Оборона Халăх Комиссариачĕн представителĕ — 1-мĕш ранглă интендант Никифоров юлташ, ВОКС председателĕ Кеменов юлташ тата ыттисем те кĕтсе илнĕ.

Хăнасем Хĕвеланăç фронтĕнчи боецсем валли Тувин халăх республикинчи ĕççынисем [illegible] (ТАСС).

Государствăна тырă сутаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районра государствăна тырă сутас ĕç сарăлсах пырать. [illegible] государствăна 14.640 килограмм, Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз—12.950 килограмм, Егоркинăри «Большевик» колхоз 12.160 килограмм сутрĕç.

Çак хисеплĕ ĕçе колхозниксем те активлăн хутшăнчĕ. Сăмахран, «Красноармеец» колхоз членĕсем 4.640 килограмм, «Большевик» колхоз членĕсем 2.160 килограмм, Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 2.950 килограмм сутнă.

Паянхи куна районĕн потребкоопераци урлă государствăна 103 тонна ытла тырă сутнă.

Заем сарас ĕç малалла пырать

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас ĕç пысăк çĕкленÿпе малалла пулса пырать. Республикăра апрелĕн 22-мĕшĕнче çĕнĕ заема татах 435.000 тенкĕлĕх сарнă, апрелĕн 23-мĕш тĕлне ăна пĕтĕмпе 63.276.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Халиччен юлса пынă Канаш тата Çĕмĕрле хулисем те заема бюджетпа пăхнинчен ирттерсе вырнаçтарчĕç.

Анчах заем укçине пухасси çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пулса пырать-ха. Апрелĕн 22-мĕшĕ хушшинче заем укçине республикăра 650.000 тенкĕ çеç пухнă. Красноармейски, Калинински, Кувакино, Первомайски, Шăхасан районĕсем çав кун хушшинче заем укçине пĕр тенкĕ те пухман. Шупашкар хулине кĕрекен колхозсенче виçĕ-тăватă кун хушши ĕнтĕ заем укçине пухас тĕлĕшпе нимĕнле ĕç те тумаççĕ. ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ ку колхозсенче ĕçлессине манса хăварать.

Комсомольски районра заемăн процентлă кăларăмне колхозсемпе артельсенче вырнаçтарас ĕç халĕ те юлса пырать, кунта плана 99 процент тултарнă. Çак цифра апрелĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа пĕр улшăнмасăр тăрать пулин те, партипе советăн районри организацийĕсем нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ.

Заем сарас ĕç республикăра ăнăçлăн пуçланса, ăнăçлăн пулса пычĕ. Вăл ĕçе çавăн пекех ăнăçлăн вĕçлессишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Заем укçине тÿлеççĕ

ИШЛЕЙ. Апрелĕн 23-мĕш тĕлне районра çĕнĕ заема 1.646.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 950.000 тенкĕлĕх, рабочисемпе служащисем хушшинче 225.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 471.000 тенкĕлĕх сарнă.

Малта пыракан колхозсем заем укçине срокчченех тÿлеççĕ. Ку тĕлĕшпе Ярапайкасси, Кипечкасси, Мамăш ялсовечĕсенчи колхозниксем пример кăтартаççĕ. Ярапайкасси ялсоветĕнчи колхозсем заема 15.425 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех районри перекет кассине кусарчĕç. Çавăн пекех Мамăш ялсоветĕнчи колхозниксем те подписка укçине 40.545 тенкĕ хывнă. Кунти «Коммунист» колхоз председателĕ Федоров юлташ 1.500 тенкĕ, Н. Иванова, Т. Семенова, Васильева колхозницăсем 500—600-шер тенкĕ тÿленĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Советски район заем укçине пухса çитерне

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 23-мĕш. **(Телефонпа).** Районри колхозниксемпе колхозницăсем, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем пекех, тăван çĕршыва юратнине, фронтшăн нимĕн те шеллеменнине кăтартаççĕ. Вĕсем Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне 1.240.000 тенкĕлĕх çырăнса, паянхи куна укçине те 100 процентчĕпех тÿлесе татрĕç. Çак пархатарлă ĕçре уйрăмăнах Чуманкасси, Чемей, Турай, Шĕмшеш ялсовечĕсенчи колхозниксем лайăх пример кăтартрĕç. Чуманкасси ялсоветĕнчи 252 çын заема 93.445 тенкĕлĕх, Чемей ялсоветĕнчи 988 çын 92.500 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тÿлесе татрĕç.

Районри партипе совет организацисем, финанс оргăнĕсем халĕ заем çырăнса илес ĕçе пур ĕççыннисене те явăçтарса çитерессишĕн кĕрешеççĕ.

Я. СИГАЕВ.

КОЛХОЗНИКСЕН ПУЛĂШĂВĔ

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр., телефонпа).** Питушкинăри «Малалла» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 41.650 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Заема çырăнса илес ĕçре уйрăмăнах колхозри активистсем пример кăтартаççĕ. Колхоз председателĕ Ф. Пикшейкин юлташ заема 2.500 тенкĕлĕх, 70 çулти колхозник, виçĕ красноармеецăн ашшĕ, Петр Отрашкин 2.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тÿлерĕç. Вĕсене кура ферма заведующийĕ Михайлов, кладовщик В. Абрамов, бригадирсем Федоровпа Майоров, колхозниксем И. Углев, М. Пикшейкин юлташсем те заема 2.000-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç те укçине тепĕр куннех парса татрĕç.

Заем укçине тÿлесси сарăлсах пырать.

ВАТĂ КОЛХОЗНИКСЕН ХАСТАРЛĂХĔ

ЕТĔРНЕ. **(Телефонпа).** Çĕнĕ заема «Пионер» колхозра 50.000 тенкĕлĕх сарнă, заем укçине 40.500 тенкĕ пухнă. Çырăнна заемăн укçине пуринчен малтан ватă колхозниксем тÿлерĕç. 72 çулти колхозник Н. Семенов заема 500 тенкĕлĕх, Вашуркин 400 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех парса татрĕç. Çавăн пекех красноармеецсен арăмĕсем Родионова 1.500 тенкĕ, Долговăпа Яковлева 500-шер тенкĕ тÿлерĕç.

Агитатор Ятрушева юлташ колхозниксене çĕнĕ заем çинчен тăтăшах ăнлантарса парать.

А. КРАСНОВ.

Çĕнĕ заемăн ăнăçлăхĕ

КАНАШ. Сиккассинчи вăтам шкулта вĕрентекенсем отечественнăй вăрçă заемне сарас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем СССР Совнаркомĕн постановленине радиопа пĕлтернĕ хыççăнах çĕнĕ заема 6.780 тенкĕлĕх çырăнчĕç те ăна колхозниксем хушшинче сарас тĕлĕшпе ĕçлеме бригадăсене тухса кайрĕç. Учитель-агитаторсем активлăн ĕçленипе заема Шмидт ячĕпе тăракан колхозра малтанхи кунах 40.000 тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран пĕрремĕш бригадăри колхозниксем 5.470 тенкĕлĕх çырăннă.

Çĕнĕ заем тухнă ятпа пухăннă митингра 70 çулхи колхозник К. Суранов юлташ çапла каларĕ:

— Манăн ывăл Коля фронтра фашистла çĕлен-калтасене хирĕç вилĕмрен шикленмесĕр çапăçать. Эпĕ хам колхозра ватăлăха пăхмасăрах ĕçлетĕп. Çĕнтерÿ тума хамăн укçа-тенкĕпе те пулăшасшăн, — терĕ.

Вăл çĕнĕ заема 200 тенкĕлĕх çырăнчĕ те укçине çавăнтах тÿлерĕ. Колхозниксем заем укçине çавăнтах 25.109 тенкĕ пухса пачĕç.

Шмидт ячĕпе тăракан колхоз хăй заема 15 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине те хывре.

А. ЗОБОВ.

24.000 тенкĕлĕх

ШАХАСАН. Чулкăмака ялсоветне кĕрекен «Память Ильича» колхоз членĕсем заема 24.000 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Колхозри активистсем халĕ çине тăрсах заем укçине пухаççĕ. **А. ФЕДОРОВ.**

1000 тенкĕ выляса илнĕ

СĔНТĔР. Хачăк ялсоветĕнчи Евдокия Чиркова юлташ Оборонăна тĕреклетмелли заем облигацийĕпе çак кунсенче 1000 тенкĕ выляса илнĕ.

(Хамăрăн информаци).

ПĔВЕСЕНЕ ÇУРХИ ШЫВСЕНЧЕН СЫХЛАМАЛЛА

Çĕрпÿ районĕн территорийĕпе Мăн Çавал, Кĕçĕн Çавал, Ункă, Куканар шывĕсем юхса иртеççĕ. Вĕсен çыранĕсем хĕррипе колхозсен вуншар арманĕсем лараççĕ. Вăл армансенчен колхозсем çулсерен пысăк тупăш илеççĕ.

Хуçалăха лайăх йĕркелесе пыракан колхозсен арманĕсем çулталăкĕпех пĕр чарăнусăр лайăх ĕçлеççĕ. Хĕлле те, çулла та армана туллин ĕçлеттерме вĕсен шыв çителĕклĕ. Мĕншĕн тесен вăл колхозсем арман хуçалăхне лайăх йĕркелесе пыраççĕ, пĕвине вăхăтра юсаççĕ, çурхи шывсем çĕмĕресрен сыхласа тăраççĕ. Анчах пур колхозсен арманĕсем те çавăн пек ĕçлемеççĕ-ха. Ку, паллах, колхоз руководителĕсем арман хуçалăхне йĕркеллĕ тытма тăрăшманнинчен килет. Вĕсен арманĕсем час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ. Çулла вĕрипе, хĕлле сивĕпе вĕсен арманĕсем шывсăр аптăраççĕ.

Çурхи шывсем тапранчĕç. Çырмасем шывпа кĕрлеме тытăнчĕç. Арман тытакан колхозсен хăйсен арманĕсене, вĕсен пĕвисене çурхи шывран сыхласа хăварас пулать. Çак ĕçе тума колхозсен халех тытăнмалла. Кăçалхи çурхи шывсенчен кашни пĕвенех лайăх упраса хăварас пулать. Ку тĕлĕшпе кăçал пирĕн нимĕнле тăкак та пулмалла мар. Çакна шута илсе, Пысăк Чăрăшри «Пучах», Рындинăри «Новая жизнь» колхозсем хăйсен арманĕсен пĕвисене çурхи шывсем ватса каясран лайăх сыхлаççĕ. Пĕвесем умĕнчи пăра каснă, вершникĕсене уçнă, пăрăсене çирĕп вĕренсемпе кăкарнă. Вĕсен арманĕсем çурхи шывсене ирттерсе яма хатĕр. Анчах «Красная Поварня», «Молодая сила», «Звезда» тата ытти хăшпĕр колхозсен арманĕсенче ĕç пачах урăхла тăрать. Ку колхозсен руководителĕсем колхоз арманĕсене çурхи шывсенчен упраса хăварас тесе нимех те туман. Паллах, çурхи шывсем вĕсен арманĕсем патĕнче те пур.

Çавăн пекех пулă кÿллисен пĕвисене те çурхи шывсем татса каясран упрас пулать. Шывсене ирттерсе яма канавсем чавса хатĕрлемелле. Ку тĕлĕшпе те «Кульмет», «Красный герой» тата ытти хăшпĕр колхозсем халĕ нимĕн те туман.

Г. ПЕТРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 22-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсен 32 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 15 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче противникăн 5.000 тонна водоизмещениллĕ танкерне тата 4.000 тонна водоизмещениллĕ пĕр транспортне путарнă.

* * *

Апрелĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 35 автомашинине, 12 полевой тата зенитнăй орудине, 8 миномета пĕтерсе тăкнă, е сиенленĕ, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть юлашки кунсем хушшинче нимĕçсен 8 блиндажне, артиллерин 3 батарейине тата миномётсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. 13 пулемет, 2 миномет, автоматсемпе винтовкăсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн боецсен Петренко лейтенант командир пулса ертсе пыракан взвочĕ нимĕçсен отрядне хирĕç çапăçма пуçланă. 200 гитлеровец, автоматчиксем ларса пыракан 6 танк пулăшнипе, пирĕн укреплениесем вырнаçнă тĕле çĕмĕрсе кĕме хăтланнă. Çапăçăвăн малтанхи минутисенчех противникăн наступлени тăвакан пехотине танксенчен уйăрса илнĕ. Тăшманăн пехоти Ахметов юлташăн станковăй пулемечĕн вăйлă вучĕ айне лекнĕ. Гранатометчиксем нимĕçсен танкĕсем çине гранатăсем вăркăнтарнă, çапла икĕ машинăна стройран кăларнă. Гитлеровецсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 120 виллине пăрахса хăварса каялла чакнă.

* * *

Лейтенант Злибкин, механик-водитель Черненко тата башеннăй стрелок Дзиканский тăракан танк экипажĕ, пирĕн пехотăн наступленине пулăшса пырса, противникăн обороны вырнаçнă çĕре çĕмĕрсе кĕнĕ. Тупăсемпе пулеметсенчен персе, танкистсем тăшманăн 3 дзотне тата нимĕçсен 60 ытла салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Прошинпа Смолин красноармеец, разведкăран таврăннă чухне, вăрманти сукмакпа пыракан нимĕçсен 7 салтакне асăрханă. Йывăç тĕмисем хушшине пытанса ларса, совет разведчикĕсем автоматсенчен персе 6 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 7-мĕш нимĕç салтакĕ тыткăна парăннă.

* * *

Гвардейски дивизири военфельдшер Чентемиров юлташ икĕ кун хушшинче çапăçу хирĕнчен аманнă боецсемпе командирсене 40 çынна, вĕсен хĕçпăшалĕсемпе пĕрлех, илсе тухнă.

* * *

Партизансен Г. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ, Курск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ территорийĕ çинче кĕрешекенскер, юлашки кунсем хушшинче 83 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ тата çар грузĕсем турттарса пыракан 21 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр районра партизансен А. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен 2.000 снаряд тата ытти тĕрлĕ боеприпассем вырнаçтарнă склачĕсене сирпĕнтерсе янă. Çав отрядри партизансем кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене темиçе çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 88-мĕш пехотнăй дивизийĕн 248-мĕш полкĕнчи 3-мĕш батальонăн çыхăну взводĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Эрнст Гумер çапла каласа панă: «88-мĕш дивизи Францире тăратчĕ. Иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче дивизие Российăна ячĕç. Фронтра пирĕн 3-мĕш батальона 44-мĕш пехотнăй дивизи çумне çирĕплетрĕç. Батальона 4 ротăран тăратчĕ, пирĕн пĕтĕмпе 700 çын шутланатчĕ. Мартăн 11-мĕшĕнче эпир малтанхи хут çапăçура пултăмăр. Темиçе кун хушшинче батальонра 400 çынна çити вилсе тата аманса пĕтрĕç. Нумай офицерсем стройран тухрĕç. Пиртен сулахай енче 44-мĕш дивизин тепĕр батальонĕ оборона тытса тăратчĕ. Вăл та питĕ пысăк çухатусем тÿсрĕ. Подразделенисенче дисциплина чакса пырать. 12-мĕш ротăн обер-ефрейторĕ Франк тата тепĕр ефрейтор, эпĕ унăн хушаматне астăваймастăп, рота командирĕн приказне пурнăçа кĕртме отказ пачĕç те рота командирне вăрçса тăкрĕç. Çав ефрейторсене конвойпах илсе кайрĕç. Салтаксем хушшинче тарăху ÿссех пырать, анчах та вĕсем офицерсенчен хăраççĕ».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Эрнст Штанн хăйĕн тăванĕсем патне çапла çырать: «...Салтаксен пурин те пĕр ĕмĕт кăна: килте пуласси. Çак асап часах пĕтессине шанатăп, ахаль пулсан ухмаха ермелле... Вăрçă татах нумая тăсăлсан, эпĕ хама хам персе вĕлеретĕп. Паллах, нумайĕшĕсем çапла тăвĕç...»

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем хăйсем оккупациленĕ совет ялĕсемпе хулисенче пурăнакан мирлĕ çынсене пĕтерсе пыраççĕ. Ленинград облаçĕнчи Старая Русса тата Полавск районĕсенчи темиçе ялта кăна гитлеровецсем 350 çынна персе тата çакса вĕлернĕ. Паршино ялĕнче 65 тăлăх ача юлнă, вĕсен ашшĕсемпе амăшĕсене гитлеровецсем вĕлернĕ. Каялла чакнă чухне фашистла вăрă-хурахсем халăх пурăнакан вуншар пунктсене çĕрпе танлаштарнă.

Апрелĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Противникăн танксем пулăшса пыракан пехоти Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн чаçсене атакăлама ăнăçсăр хăтланса пăхнă. Пирĕн боецсем çак атакăна сирсе янă, нимĕçсен ирĕксĕрех каялла чакмалла пулнă, вĕсен çапăçу хирĕнче 900 салтакпа офицер вилсе юлнă. Çапăçу вăхăтĕнче тăшманăн 3 танкне, вăл шутра пĕр йывăр танка çĕмĕрнĕ, противникран пулеметсем, автоматсем тата винтовкăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра К. ялĕ патĕнчи çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çынна яхăн вилнĕ.

* * *

Ольшев юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллери чаçĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен пĕр танкне, 2 орудине тата боеприпассем тиенĕ 2 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сапрыкин командирăн танкĕ атака вăхăтĕнче нимĕçсем йышăннă Н. пунктне чи малтан çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Орудисенчен персе тата гусеницăсемпе таптаса, танкистсем противникăн темиçе огневой точкине, 50 яхăн гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен танкĕ пирĕн пĕр подразделенине атакăлама хăтланса пăхнă. Красноармеецсем Емельяновпа Татарников юлташсем лайăх вырăн йышăннă та тăшман машини çине танка хирĕç пемелли пăшалсенчен пеме тытăннă. Броньăна шăтарса вут тивертсе яракан темиçе пуля танкăн мотор вырнаçнă пайне лекнĕ. Нимĕçсен танкĕ çунса кайнă.

* * *

А. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Смоленск облаçĕн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, юлашки кунсенче нимĕçсен гарнизонĕсем çине темиçе хут та ăнăçлăн тапăннă. Партизансем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 120 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсен тыткăна лекнĕ ефрейторĕ Ганс Пауман çапла каласа панă: «Эпĕ виçĕ уйăх ытла Харьковри лазаретра выртрăм. Унтан март уйăхĕн вĕçĕнче тухрăм. Аманнă, чирленĕ тата тăм илтерсе янă çынсем лазаретра 1000 çынна яхăн пулчĕç. Сывалакансене нихăшне те отпуска ямасчĕç. Алă пÿрнисĕр е ура пÿрнисĕр тăрса юлнă салтаксене караул службинче пулма е хуçалăх командисене яратчĕç. Анчах халĕ ĕнтĕ ун пек командăсене те час-часах çапăçăва кĕртсе яраççĕ. Салтаксен шухăш-кăмăлĕ начар. Тăван çĕршывран хурлăхлă çырусем килеççĕ. Манăн арăм ăна кашни кунах 14—15 сехет ĕçлеттереççĕ тесе çырать. Карточкăпа паракан продуктсен нормине уйăхран уйăхах чакарса пыраççĕ, çавăнпа та арăм выçă ларать».

* * *

Штеттин хулине нимĕç ефрейторĕ Эрих Друцель çапла çырать: «...Кĕçĕр каллех пирĕнтен пĕри — пилĕк ача ашшĕ вилчĕ. Ун пеккисене курма эпир хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Халĕ чи йывăрри вăл — вилнисене пытарасси, мĕншĕн тесен вĕсем нумайлансах пыраççĕ...»

* * *

Черногорири (Югославия) партизансен отрячĕсем нумаях та пулмасть Н. районĕнче Итали оккупанчĕсем çине тапăннă. Партизансем 10 ручной тата 2 станковăй пулемет, 2 миномет тата гумтирсем нумай тытса илнĕ. Итали захватчикĕсем пысăк çухатусем тунă.

Оборона фончĕ валли гектар çурă тырă акаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 23-мĕш. **(Телефонпа).** Краснодар крайĕнчи Выселковски районри Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем чĕнсе калани çине ответлесе, Янчеллă ялсоветĕнчи «Победа» колхоз членĕсем кăçал нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене тăванла пулăшу пама планран ирттерсе пĕр гектар çурă çĕр çине тырă акса хăвараççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Партипе правительство ĕçкунĕсен минимумне ÿстерме йышăннине республикăри колхозниксем ырлаççĕ

Ĕç дисциплинине çирĕплетекен пысăк вăй

КУСЛАВККА, апрелĕн 23-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен йышăннă постановление сÿтсе-яваççĕ. Партипе правительствăн решенине кашни колхозник тĕплĕн ăнлантарса пама партипе совет организацийĕсен районри активĕ пурĕ 24 çын колхозсене тухса кайрĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительство ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен йышăннă постановление ырласа йышăнаççĕ, пухусенче сÿтсе-явса вăл постановление чыслăн пурнăçлама сăмах параççĕ.

«Труд» колхоз членĕсем хăйсен аслă пухăвĕнче постановление сÿтсе-явнă хыççăн çапла каларĕç: «Партипе правительствăн çак постановленине эпир хĕрÿллĕн ырлатпăр, ăна кашни кун чыслăн пурнăçласа пырассине хамăрăн чи чыслă ĕç тесе шутлатпăр, тăван çĕршывпа хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ тырпул, аш-какай, сĕт-çу туса парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулатпăр».

Колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи çуракине 9 кун хушшинче пысăк пахалăхпа туса ирттерме обязательство илчĕç.

«Новый путь» колхоз членĕ 65 çулти А. Ломоносов колхозник пухура çакăн сăмах туха каларĕ.

— Партипе правительствăн çак питех те ырă постановленине эпир чыслăн пурнăçлăпăр. Хамăрăн пĕтĕм вăя çуракине чи кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттересси çине хуратпăр. Çуракине ăнăçлăн ирттернинчен тырпулăн тухăçлăхĕ килет. Вăйлă тырпул туса илни гитлерăн бандисене пуçĕпех пĕтерсе тăкмалли сехете çывхартакан пысăк вăй пулса тăрĕ.

Партипе правительствăн постановленине колхозниксем пысăк активлăхпа сÿтсе-яваççĕ. Вăл колхозсен ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшнине колхозниксем аван ăнланаççĕ. Постановление сÿтсе-явма пухнă пухусенче Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра 8 колхозник, «Коминтерн» колхозра 9 колхозник, «Ударник» колхозра 7 колхозник сăмах тухса каларĕç.

Н. ЛЬВОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Колхоз çамрăкĕсен кăмăлĕ

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Тивĕшри вăтам шкулта вĕренекен комсомолецсемпе пионерсем СССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстерессси çинчен» йышăннă постановленине вуласа тухрĕç. Партипе правительствăн постановленине ырласа, комсомолецсемпе пионерсем çуллахи каникул вăхăтĕнче колхозсенче тата лайăхрах ĕçлеме пулчĕç.

6-мĕш класра вĕренекен отличник Д. Семенов иртнĕ çул колхозра ĕçлесе 85 ĕçкунĕ тунă. Партипе правительствăн постановленине вуласа тухнă хыççăн вăл кăçал колхозра татах та лайăхрах ĕçлеме пулчĕ. Д. Семенов пионерпа пĕр колхозрах пурăнакан Иванов, Игнатьев, Николаев пионерсем те вĕренÿ çулĕ пĕтнĕ хыççăн колхозра активлăн ĕçлеме пулаççĕ.

П. ЛУКИН.

Çуркуннехи ĕçсем пуçланчĕç

Клевер акса пĕтернĕ колхозсем

ЕТĔРНЕ, апрелĕн 23-мĕш. (Телефонпа). Буденный ячĕпе тăракан колхозра çуркуннехи ĕçсем пуçланчĕç. Колхоз 46 гектар çĕр çине клевер акса хăварчĕ.

Колхозри агитаторсем колхозниксемпе колхозницăсене тĕнчери лару-тăру çинчен, вăрçă фрончĕсенчи хыпарсем çинчен тăтăшах вуласа параççĕ. Паян колхозниксем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстерессси çинчен йышăннă постановление итлерĕç. Партипе правительствăн постановленине колхозниксем ăшшăн ырлаççĕ, вăл постановлени колхозсенче ĕç дисциплинине малалла çирĕплетет, теççĕ.

Клевера массăллăн акма «Комбайн», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем те тухрĕç.

А. КРАСНОВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 23-мĕш. (Телефонпа). Хурамалти Калинин ячĕпе тăракан колхозăн тăвăр бригадисем те апрелĕн 23-мĕшĕнче клевер акма тухрĕç. Ирхине ирех пуçласа 3—4 сехет хушшинче пурĕ 25 гектар çине клевер акса хăварчĕç. Çапла колхоз клевер акас плана ăнăçлăн пурнăçларĕ.

Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. П. Чижов бригадир пулса ертсе пыракан бригадăри вăтă колхозниксем Г. Дашков, А. Слепков, И. Данилов юлташсем нормăна 250-шар процент тултарса ĕçлеççĕ.

Колхозра çĕре сăнаса тăракан бригада организациленĕ. Вăл бригадăри колхозниксем халĕ кулленех уйсене сăнаса тăраççĕ, çурхи шывсем тăвакан çурăк-шăтăксене вăхăтра питĕрсе, уйсене шывсенчен упраççĕ.

С. ИЛЬИН.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 23-мĕш. (Телефонпа). Медикассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз ĕнер 5 гектар çине клевер акса хăварчĕ. Паян клевер акма «Трактор» колхоз тухнă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Аптечкăсем хатĕрлеççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. (Хамăр корр.). Патăрьелĕнчи аптекăра ĕçлекенсем машинно-тракторнăй станцин трактор бригадисем валли 12 аптечка хатĕрлерĕç. Вĕсем çак кунсенчех районри колхозсем валли те аптечкăсем хатĕрлесе çитереççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Çĕрулмине яровизацилеме халех тытăнмалла

Çĕрулмине яровизацилесе ăксăн вăл иртерех пулса çитет. Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем çулсерен ир пулса çитекен çĕрулми туса илеççĕ. Ку колхозсенче çĕрулми тăррисене яровизацилесе лартнипе тата агротехникăн ытти мероприятийĕсене анлăн пурнăçа кĕртсе пынипе, çĕрулми вĕсен июль уйăхĕнчех йышлăн пулать. Тĕслĕхрен, Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз 1940 çулта «Лорх» сортлă ир пулакан çĕрулмине июль уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех кăларма пуçланă. Кашни гектартан 90 центнер çĕрулми туса илнĕ.

Яровизацилесе лартнă çĕрулмин тухăçлăхĕ ахаль лартнă çĕрулмин тухăçлăхĕнчен чылай пысăк. Çĕрулмине икĕ майпа яровизацилеме пулать: çутă та ăшă вырăнта тата нÿрĕ çĕрте. Çутă та ăшă вырăнта яровизацилесси çапла пулса иртет. Çĕрулми вăрлăхне çÿхе сийпе сарса пăрахаççĕ. Пÿлĕмри температура 12—15 градус ăшă пулмалла. Çапла сарса вырттарнипе лартма вăхăт çитиччен çĕрулми тăррисем кĕске симĕс хунавсем кăлараççĕ тата тымар тухмалли куçĕсем палăрма пуçлаççĕ. Кăна тума сахалтан та 30—45 куна çити вăхăт кирлĕ пулать.

Нÿрĕ майпа çĕрулми тăррисене нÿрĕ йывăç кĕрпи, торф, тислĕк ăшĕнче яровизацилеççĕ. Çĕрулми вăрлăхне корзинкăсемпе ещĕксем ăшне 4—5 сийĕн хураççĕ, сийсене пĕр-пĕринчен нÿретнĕ пăчкă кĕрпи, торф уйăрса тăрать. Тислĕк купи ăшĕнче яровизацилес пулсан, çĕрулми вăрлăхĕн сийĕсем хушшинче 2—3 сантиметр тăпра сийĕсем пулмалла. Нÿрĕ вырăнсенче яровизацилесси 15—20 градуслă температурăра пулса иртмелле. Нÿрĕ вырăнта яровизациленĕ çĕрулми вăрлăхĕ çĕр çине лартсан хăвăртрах ÿсме тытăнать.

Çапла çĕрулми вăрлăхне яровизацилеме нумай вăхăт кирли курăнать. Ăна агротехника кăтартнă пек ăнăçлăн туса ирттерес пулсан, паллах, çĕрулми вăрлăхне яровизацилентерме малараххумалла. Анчах хăшпĕр районсенче çак ĕç питĕ те сÿрĕккĕн пулса пырать. Уйрăмах Сĕнтĕрвăрри, Первомайски, Комсомольски, Шăхасан, Кувакино, Пăрачкав, Çĕмĕрле районĕсенчи чылай колхозсем çĕрулми вăрлăхĕсене яровизацилеме халĕ те тытăнман. Комсомольски райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Мустафин юлташ çĕрулмине яровизацилеме халĕ те ир тесе лăпланса ларать. Çĕмĕрле райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Чумейкин юлташ районри колхозсенче çĕрулми вăрлăхне яровизацилес ĕç мĕнле пыни çинчен пачах та пĕлмест, çак ĕçе ертсе пымасть. Ишлей райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Антонов юлташа ку тĕлĕшпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çирĕп кăтартусем панă пулсан та, паян кун та ĕçре улшăнусем туни курăнмасть.

Çĕрулми вăрлăхне яровизацилеме халех тытăнмалла. Пур колхозсен те çĕрулми вăрлăхĕсене яровизацилес ĕçе халех организацилемелле.

Р. ОСАНОВ.
ЧАССР Наркомземĕн пахча-çимĕç Управленин начальникĕ.

Шкул ачисем шкула пурте тĕрĕс çÿреччĕр

СĔНТĔР. («Чăваш Коммуни» корр.). Кăçалхи вĕренÿ çулĕ вăрçăн йывăр условийĕсенче иртет. Тĕрлĕрен йывăрлăхсене пăхмасăрах, шкулсен хăйсен вĕренÿ ĕçне пĕр начарлатмасăр лайăх туса пымалла.

Çакна асра тытса, Сĕнтĕр районĕнчи нумай шкулсем вĕренÿ çулне йĕркеллĕн вĕçлесе пыраççĕ, çак хушăрах вĕсем фронта тата колхозсене пулăшас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тăваççĕ.

Шкулсем умĕнче тăракан ответлă задачăсенчен пĕри вăл — шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентесси. Сĕнтĕр районĕнче кăçалхи вĕренÿ çулĕнче пурĕ 6.539 ача шкула çÿремелле пулнă. Вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕнче вĕсем пурте шкулсене çÿренĕ. Елкино, Катькасси, Токшик, Урпаш тата Пăсăрман шкулĕсенче вĕренĕве явăçтарнă ачасем паян кунчченех шкула пурте тĕрĕс-тĕкел çÿреççĕ. Кунти учительсем ачасене вĕренме çителĕклĕ условисем туса панă. Анчах çаксемпе юнашарах чылай шкулсенче пысăк çитменлĕхсемех пурри курăнать. Çатракассинчи туллимар вăтам шкул тата Муркашри вăтам шкулсенче вĕренекенсем шкула сиктерсе çÿреççĕ. Уйрăмăнах Çатракассинчи туллимар вăтам шкулăн ĕçĕсем япăх. Вĕренÿ çулĕн пуçламăш кунĕсенче V—VI классенче 58 ача вĕреннĕ, вăл шутран паянхи куна 10 ача пĕр сăлтавсăрах вĕренме пăрахнă, I—IV классенче апрелĕн 6-мĕшĕнче 90 ачаран 18 ача урока пыман.

Шкул директорĕ Смородинова юлташ тата вырăнти совет исполкомĕ ачасен ашшĕ-амăшĕсене законсем çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе япăх ĕçленĕ. Смородинова юлташ ĕç дисциплинине çирĕплетсе пырас вырăнне, ăна хăй пăсать. Январĕн 30-мĕш кунĕнче ĕçкĕре çÿресе вăл занятие 25 минута таран кая юлса çитнĕ. Хăшпĕр чухне, хăйĕн урокĕсене ытти учительсене парса хăварса, çĕрĕ-çĕрĕпех ĕçкĕре çÿренĕ. Смородинова ĕç дисциплинине пăсни çинчен РОНО инспекторне Водоватова юлташа пĕлтернĕ, анчах вăл та ăна ответ тыттарман.

Çапла ĕнтĕ Çатракассинчи туллимар вăтам шкул вĕренÿ ĕçне начарлатни унти учительсем хăйсен ĕçĕсене çителĕксĕр туса пынинчен килет.

Шкул ачисем шкула пурте тĕрĕс, лайăх йĕркеллĕ çÿреччĕр тесен, пуринчен малтан учительсен хăйсен çирĕп дисциплинăллă пулмалла. Вĕсен хăйсен ĕçĕсене юратса, тăрăшса туса пымалла. Ачасен ашшĕ-амăшĕсене харпăрхăй ачине мĕншĕн тата мĕнле вĕрентме кирли çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла. Вĕсене ăнлантарса пама вĕсен ачасен килĕсене каяссинчен те туртăнса тăма юрамасть. Çакăнпа пĕрлех тата вĕренекен ачан шкула çÿреме чăнахах та условисем йывăр пулсан, учительсен коллективĕн (кунта шкул директорĕ малта пулма кирлĕ) вăл ачашăн шкула çÿремелли условисене туса пама тăрăшмалла.

Г. АКИМОВ.

Çăмарта памалли обязательствăсене тултараççĕ

СĔНТĔР. (Хамăр корр.). Районри чылай колхозсем государствăна çăмарта памалли обязательствăна пурнăçласа пыраççĕ. Çак кунсенче Кăпас ялсоветĕнчи «Ким» колхоз 150 çăмарта, Сĕнтĕр ялсоветĕнчи Фрунзе ячĕпе тăракан колхоз 246 çăмарта, Шупуç ялсоветĕнчи «Коммунар» колхоз 103 çăмарта панă.

Па-де-Кале районĕнчи Германие хирĕçле саботаж

БЕРН, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). Францирен килекен çынсем Францин оккупациленĕ зонинче, уйрăмăнах Па-де-Кале проливĕ таврашĕнче, диверсисем, Германие хирĕçле саботажсем вăйлăланса пыни çинчен каласа пĕлтереççĕ. Сăмахран, Этаплĕре тата Калере нумаях пулмасть икĕ транспорт судни путнă: пĕрин сасартăк хуранĕ çурăлса кайнă, теприн çинче бензин пичкисене вут тытнă.

Па-де-Кале департаментĕнче чугун çул [ ]нче пысăк катастрофа пулнă вăхăтра оккупациленĕ çарăн салтакĕсем питĕ нумай виле тата питех те кирлĕ çар пурлăхĕсем чылай пĕтнĕ. Çавна кура, нимĕçсен командованийĕ 15 француза «чугунçул çинче татти-сыпписĕр саботаж туса пынăшăн» персе вĕлерни çинчен пĕлтернĕ. Çав кунах тата тепĕр 20 çынна персе вĕлерни çинчен пĕлтернĕ. Кусене Ланс хули патĕнче (çав департаментрах) çинчĕç салтакĕсем çине «тапăннăшăн» тесе вĕлернĕ.

Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, Францин çурçĕр-хĕвеланăç енчи сыранĕсем çывăхне вырнаçнă нимĕçсен аэродромĕсенче те чылайĕшĕнче пысăк диверсисем пулса иртнĕ; нимĕçсем саботажсемпе диверсисем малашне те пулччăр тесе тĕрлĕ чрезвычайнăй мерăсем йышăнаççĕ. Анчах, çавтери тĕсесçĕ пулсан та, Франци патриочĕсем çаплах оккупациллĕ çара, хăйĕн чăçĕсене нумайĕшне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне янипе ахаль те вăйсăрланса юлнăскере, татах та ытларах вăйсăрлатса пыраççĕ.

Францири хресченсем саботаж тăваççĕ

ЦЮРИХ, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). «Нейе цюрхер цейтунг» хаçат Виширен панă хăйĕн пĕлтерĕвĕнче вырăнти влаçсем тата оккупациллĕ çарсен командованийĕ Францири хресченсем тырă хатĕрлекен органсене тата оккупациллĕ влаçсене тырă парасшăн мар пулнишĕн питĕ пăшăрханнине палăртать. Марсель департаменчĕн префекчĕ Боннафоус Францире мартăн 1-мĕш тĕлне 5 миллион центнер тырă çитмн пулнă тесе пĕлтернĕ. Ку ĕнтĕ çĕнĕ тырпул пухса иличчен пĕр уйăх çурă маларах Францире пĕр татăк çăкăр та юлас çуккине кăтартса тăрать. Боннафоус шухăшĕпе, çак йывăр лару-тăрăвăн сăлтавĕ çакăнта: Францин оккупациллĕ влаçсем валли 5 миллион центнер тырă тăратма тата хăйĕн тыткăналекнĕ салтакĕсене, Германире пурăнакансене, тăрантса усрама тивнĕ, тепĕр сăлтавĕ тата çакăнта: хресченсем хăйсен тыррисене пытараççĕ.

Юлашки вăхăтра Виши влаçĕсем хресченсене хăйсен ирĕкĕпех тырă пама ÿкĕтлесе нумай воззванисем пичетлесе кăларнă. Анчах çавăнтан нимĕн ĕç те тухман. Çакăн хыççăн вара Виши правительстви тырă памалли юлашки срок апрелĕн 1-мĕш пулать тесе палăртнă. Кам та кам çав срока пăхăнмасть, çавна хытă айăпламалла. Правительствăн çак приказне мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе пыма полицие тата ĕлĕк фронтовик пулнă çынсенчен тăракан легиона хушнă. Виши влаçĕсем тырă тăратас ĕçри катастрофа политикăллă пысăк йывăрлăхсем патне илсе пырассине, пысăк пăлханусем тума пултарассине ăнланаççĕ, тесе çырать «Нейе Цюрхер цейтунг» хаçатăн корреспонденчĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Апрелĕн 18-мĕшпе 22-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Японирен пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 18-мĕшĕнче кăнтăрла Япони çинче Америка самолечĕсем курăнса кайнă. Вĕсем Токио, Кобе, Йокогама, Нагоя тата ытти районсем çине вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă. Пĕлтернĕ тăрăх, самолетсем сывлăшпа Япони çыранĕсем патнех çывхарнă авианосецсем çинчен вĕçсе хăпарнă. Япони пичетĕнче пĕлтернĕ тăрăх тата официальнăй çынсем каланă тăрăх, асăннă районсенче бомбăсем пăрахни пысăк сиенех тăвайман. Çапла пулин те çак тапăну Японири халăха калама çук пăшăрхантарнă, ку ĕнтĕ сывлăшран вĕçсе пырса тапăнни çинчен тата бомбăсем пăрахса сиен кÿни çинчен ятарласа кабинет ларăвĕнче сÿтсе-явнинчен те курăнать. Противник Япони çывăхнех çынă, çакă вара çĕршыва ертсе пыракансене хăратать, Япони халăхĕ вăрçа чи пуçласа çывăхра курать.

Фронтра юлашки 3—4 кун хушшинче вăйлă çапăçусем Бирмăра пулса иртнĕ. Кунта пĕтĕм фронт сарлакăшĕпех хĕрÿллĕ çапăçусем пыраççĕ. Иравади юханшывĕн айлăмĕнче çапăçусем Енагьяунг хули районĕнче пыраççĕ. Çав хула нефть промышленноçĕн чи пысăк центрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Ăна темиçе кун каялла японецсем йышăннă пулнă. Хуларан кăнтăр еннерех вырнаçнă районра Англи войскисен 7 пин çынна çитекен пĕр ушкăнĕ тăшман тылне тăрса юлнă. Çав участокра Англипе Китай войскисем пĕрле кĕрешеççĕ. Апрелĕн 19-мĕшпе 20-мĕшĕнче хулашăн вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Çав района Китай войскисен çĕнĕ чăçĕсем пынă хыççăн Китай войскисем контрнаступлени пуçласа янă та японецсене Енагьяунгран хăваласа кăларнă. Çав вăхăтрах Англи войскисен ушкăнне çавăрса илнĕ унка та татнă. Англи войскисен ушкăнĕ тăшман ункинчен тухса тĕп вăйсемпе пĕрлешнĕ. Енагьяунгран кăнтăр еннерехри районра çапăçусем чарăнман-ха.

Хĕвелтухăçнелле, Ситтанг юханшывĕн айлăмĕнче çапăçусем Тоунгу-Мандалай чугунçулĕ çинче, Тоунгуран 55 миля çурçĕр енче пулса пыраççĕ. Чугунçулран 7 миля хĕвеланăçнелле те, 100 миля кăнтăр хĕвелтухăçнелле те вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Унта японецсем, Ситтанг юханшывĕн айлăмĕнчи Китай войскисене сулахай флангран хăратас тесе, Таи территоринчен наступлени пуçласа янă. Японипе Китай войскисем Бау кÿлли таврашĕнче çапăçаççĕ.

Филиппинра японецсем темиçе кун хушши Коррегидор утравĕсем çине йывăр артиллерирен персе тăнă. Çав артиллерие вĕсем Батаан çурутравне тата Маниль заливĕн кăнтăр çыранĕ (Лусон утравĕ) çине вырнаçтарнă пулнă. Артиллерирен пенĕ хушăрах Коррегидор çине татти-сыппиcĕр сывлăшран бомбăсем пăрахса тăнă. Америка форчĕсем хирĕç персе японецсен темиçе батарейине лăплантарнă, японецсен Батаан çурутравĕ çине вырнаçнă войскисем çине те пенĕ.

Японин юлашки кунсенче Себу тата Танай утравĕсем çине пырса кĕнĕ войскисемпе Америка войскисем хушшинче те çапăçусем пулса иртнĕ. Японецсене, вĕсене авиаци пайлăн пулăшса пырать пулин те, питĕ пысăк йывăрлăхсем тÿсме тивет, Американăпа Филиппин войскисем хăватлăн хирĕç тăраççĕ.

Англичансем каллех Франци çыранĕсем çине кайса килнĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 22-мĕш. (ТАСС). Англире коммюнике кăларнă. Унта çапла пĕлтернĕ: апрелĕн 22-мĕшĕнче ирхине Англин хĕçпăшаллă вăйĕсем Францин Булонь çывăхĕнчи çыранĕ çинче разведка тăвас тесе пысăках мар вăйпа кайнă. Германин çак вырăна хÿтĕлесе тăракан войскисене каялла чакма тивнĕ. Англичансен патрулĕ оборона линийĕ урлă каçса пала кĕнĕ, икĕ сехет иртсен тин каялла тухнă. Англи войскисем питĕ те сахал çухатусем тунă.

Разведка тăвакан çав патрулĕ кÿтĕлесе пыракан тинĕс-çар вăйĕсем противникăн тральщикĕсемпе тĕл пулнă. Германин пĕр тральщикне пысăк сиен тунă, тепĕрне тивертсе янă. Çав тытăçура Англин карапĕсене пĕрне те сиен тăваймаи, карапсен личнăй составĕн çухатăвĕсем питĕ те сахал.

Норвегири арестсем

ЖЕНЕВА, апрелĕн 22-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви Стокгольмран çапла пĕлтерет: Ослора официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Норвеги влаçĕсем апрелĕн 18-мĕшĕнче норвежецсене 100 çынна çити арестленĕ. Арестленĕ çынсенчен нумайĕшĕ—офицерсем, адвокатсем, банкирсем, художниксем. Çав çынсене мĕншĕн арестленине коммюникере кăтартман.

Финляндире продовольстви нормисене татах чакарнă

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 21-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: Хельсинкире майăн 1-мĕшĕнчен пуçласа продовольстви памалли нормăна татах чакармалла туни çинчен официальнăй йĕркепех пĕлтернĕ.

Сталинла премин лауреачĕсем çырнă произведенисем чăвашла

Кăçал Сталинла премисем илме тивĕçлĕ пулнă писательсен произведенийĕсене чăваш халăхĕ те юратса вулать. С. Маршакпа Сергей Михалковăн ача-пăча сăввисене хаçат-журналсенче пичетлесе кăларнă. Виктор Гусевăн «Çĕмĕрле ачине» пирĕн вĕренекенсенчен нумайĕшĕ пăхмасăр калама пĕлеççĕ.

И. Эренбургăн «Хăравçă салтак Бенито Муссолини» ятлă памфлечĕ «Çĕленкалтасем» сборникре пичетленнĕ.

Константин Симоновăн «Хĕрÿллĕ кунсем» очеркне тата Р. Карменăн «Çапăçу малалла пырать» ятлă корреспонденцине Чăвашсен Государство издательстви уйрăм кĕнекесем туса кăларнă.

Александр Корнейчукăн «Платон Кречет» драмине Академи театрĕн чăваш труппи икĕ сезон хушши кăтартрĕ.

Çитес уйăхсенче Чăвашсен Государство Издательстви Николай Тихоновăн тăшман хупăрласа илнĕ Ленинградри çынсем çинчен çырнă калавĕсен кĕнекине пичетлесе кăларать.

Ф. Аф.

Пусмăртан çăлăннă ялта

Ч. ялне нимĕç фашисчĕсем иртнĕ çулти сентябрь уйăхĕнче пырса кĕнĕ, 1942 çулти январь уйăхĕнче унтан тухса тарнă. Çак çынçиенсем, юн ĕçекен çĕлен-калтасем, аслă çул çинчи тискер бандитсем, Ч. ялĕнче 4 уйăх та 12 кун пурăнса, 7—8 çулти ача-пăчаран пуçласа 70—80 çулти ваттисене çитиччен сахал мар макăртнă; пусмăрта пурăннă çынсен сахал мар куççулĕ юхнă, фашистсен сахал мар мăшкăлĕсене тÿсме лекнĕ. Çакăн пек асап-мăшкăла тÿсекен ял хушшинче пĕр çын çеç тăван çĕршыва сутнă: вăл фашистсен тарçи Старорусов пулнă. Староста пулнă вăл, хăй патне нимĕç офицерĕсене вырнаçтарнă, вăрă-хурахла çарăн салтакĕсем колхозниксене çаратса пычă пурлăхран сахал мар хăй валли туянса юлнă. Çак сутăнчăк ятне Ч. ялĕнчи колхозниксем çиллĕллĕ ылханупа çеç асăнаççĕ.

Ч. ялĕнчи колхозниксем пуян та культурăллă пурăннă. Колхозра ĕне, хур-кăвакал, сурăх, чăх-чĕп, сысна усраман кил пĕрре те пулман. Кашни килте тенĕ пекех çĕвĕ çĕлемелли машина, патефон, библиотечка пулнă. Кашни колхозникĕн пÿрчĕ, пирĕн патăрти пек каласан, пятистеннăй. Нумайĕшĕн кĕлет тулли тырпул, килкарти тулли выльăх-чĕрлĕх пулнă. Халĕ çаксем çинчен аса илсен, колхозниксем нимĕç бандичĕсене çичĕ хутчен ылханса илеççĕ. Халĕ вĕсем хăйсем нимĕнсĕр тăрса юлни çинчен, анчах çавах та хăйсене ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара мĕнпур майпа пулăшма хатĕр тăни çинчен каласа параççĕ.

* * *

Вася ятлă ача урамра выляса çÿрет. Пирĕн красноармеецсем яла çитсе кĕнĕ чухне вăл пире хирĕç чупса тухрĕ.

— Дядя политрук, у нас сейчас немцы не живут, они удрали, дома только мама и папа, они просили к нам зайти, — тет Вася. Çапла вăл 7—8 красноармееца хăйсем патне илсе кĕчĕ.

Ваççăсен пÿртне кĕрсенех 4 çулти хĕрача амăшĕ кăкри çумне çыпçăнчĕ, ăна мăйĕнчен ыталаса тытрĕ, хăй хăраса ÿкнĕ, амăшĕнчен: «Немцы, немцы, мама?» — тесе ыйтать. Амăшĕ ăна эпир вырăссем, красноармеецсем пулнине ăнлатса каласа парать.

— Çапла, тăвансем, пирĕн патăрта ваттисем кăна мар, тин калаçма тытăнакан ачасем те нимĕçсенчен хăракан пулса юлчĕç. Çак усал чир халĕ те иртсе каймасть,—каласа парать пире Ваççăн амăшĕ.

Вĕсен, Крючковсен çемьин, халĕ икĕ чăх кăна тăрса юлнă. Ĕне те, сурăх та, сысна та, хур-кăвакал та çук. Нимĕç фашисчĕсем çитиччен Крючковсен пурте ытлăн-çитлĕпех пулнă. Нимĕç офицерĕ вĕсен ĕнине илме пырсан, Ваççăн ашшĕ Петр Крючков, инвалид, амăшĕ Агрипина тата Ваççăпа унăн пĕчĕк йăмăкĕ те çĕре ÿксех макăрнă, ĕнине кăкарнă пăявран тытса выртнă. Ĕнене памастпăрах тесе шутланă вĕсем. Анчах нимĕн те тухман. Офицер-бандит Агрипинăна тата унăн сакăр çулти ывăлне, Ваççăна нухайккăпа хĕнесе тăкнă, Петр Крючкова хăйне револьвертан персе вĕлерме тăнă. Çапла вара икĕ салтак — эсэсовецсем — Крючковсен ĕнине, сысна çурине тата икĕ хурне илсе тухса кайнă, хăйсене вĕлерес пек хĕнесе хăварнă. Петр Крючков çакăн çинчен жалоба пама нимĕçсен штабне кайнă, анчах унта та хĕрхенмен, ăна пĕрре хĕнене те тытса хупнă.

* * *

Пĕр офицер, икĕ салтак, виççĕшĕ те ÿсĕрскерсем, манăн мунча тавра кускаласа çÿреççĕ. Мĕн пыраççĕ вĕсем? Е мунчана пытарнă чăхсене те туп рĕç пулĕ-и? тесе шутлатăп, — тет Анастасия Павловна. Мĕнпур пĕр пурлăхне, выльăх-чĕрлĕхне нимĕçсем çаратма тытăнсан, Анастасия Павловна мунча урайĕ айне пилĕк чăххине хупса пытарнă пулнă. Фашистсем мунчана çĕмĕрсе кĕнĕ. Анастасия Павловна вĕсене: манăн унта нимĕн те çук, пĕтĕм пурлăха йăлтах сирĕн салтаксем çаратса кайрĕç, тенĕ. Вăл тархаслани-йăлăнни бандитсемшĕн пăрçана стена çине сапнă пек те пулман. Карчăка хĕнесе тăкнă, мунча урайне сÿтнĕ, пытарнă чăхсене тупса илнĕ, кайран пÿртне те чĕртсе çунтарса янă, 16 çулти ывăлне Мишăна вĕлерес пек хĕненĕ, вăл халĕ те сывалса çитмен.

* * *

Хăйсем вăхăтлăха оккупациленĕ районсенче нимĕçсем темĕн тĕрлĕ мăшкăллă ĕçсем тунă. Кам та пулин фашистла йĕркепе килĕшме пултараймасть пухăша палăртсанах, уншăн ăна вĕлерме пултарнă. Ахальтен мар, çак ялти патриотсенчен 10 çын алла хĕçпăшал тытса партизана кайнă, вĕсем совет халăхĕшĕн, унăн ирĕкĕшĕн. Сталиншăн, хăйсен мăшкăл та пусмăр тÿснĕ тăванĕсемшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма тупа тунă. Партизансене пĕтĕм колхозниксем хисеп ленĕ, вĕсене пулăшнă. Ахальтен мар çак Ч. ялне вырнаçнă нимĕç çарĕн гарнизонĕнче 4 уйăх хушшинче темиçе вунă салтак, темиçе офицер «çухалнă», вĕсен виллисене вăрманта е çырмасенче тупнă. Штаб вырнаçса тăнă çурта çакăм граната пăрахса, темиçе фашиста пĕтерсе хунă. Партизан П. юлташ пĕр хăй кăна 3 офицера персе вĕлернĕ. Маттур партизансем хăйсен социализмлă çĕршывĕ умĕнче тумалли ĕççене чыслăн пурнăçласа пынă. Вĕсем нимĕç фашисчĕсене кăнтăрла та, çĕрле те канăç паман. Партизансене хирĕç кĕрешме карательнăй отряд çитнĕ. Анчах ку отряд та партизансене тытайман, темиçе салтакне çухатса, вăл ахалех тухса кайнă. Тăватă уйăх хушши колхозниксен пухăвĕ пулман, тăватă уйăх хушши никам та каçхине, 7 сехет иртсен, урама тухман, кÿршĕсем патне, тăванĕсем патне калаçса ларма çÿреймен. Нимĕçсем совет гражданĕсене никама та шанман, 15—16 çулти ачасене партизансем пулĕ тесе темиçешер хутчен тытса штаба илле-илле кайнă, персе вĕлерессипе хăратнă.

Мăшкăл, пусмăрлăх, асап тÿснĕ хыççăн колхозниксемшĕн савăнăçлă кун çитрĕ. Пирĕн вĕсене пухăва пуçтарса калаçмалла пулчĕ.

Пуху каçхине 6 сехетре пухăнмаллаччĕ. Эпир унта халăх пухăниччен çур сехет малтан çитрĕмĕр. Çурчĕ пĕчĕкрех пирки пирĕн кашни килтен пĕрер çын кăна чĕнме лекрĕ. Анчах та халăх çавтери нумай пухăнчĕ. Урайĕнче вырăн çитменнипе хăшпĕрисем кăмака çине хăпарса тăчĕç. Пурте тăван совет воинĕсене курасшăн, вĕсемпе калаçасшăн.

Эпир Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне панă приказĕ çинчен доклад тунă хыççăн колхозниксем темĕн чухлĕ ыйтусем пачĕç, темиçе çын тухса каларĕç.

Пуху çакна кăтартрĕ: нимĕç фашисчĕсем вăхăтлăха оккупациленĕ районсенчи совет ĕççыннисене темĕн пек юнлă террорпа хăратма тăрăшнă пулсан та, темĕнле улталама хăтланнă пулсан та, пирĕн колхозниксем совет стройĕшĕнех тăнă. Çакна колхозниксем хăйсем вырăллă пурăннине пăхмасăрах Хĕрлĕ Çар валли 100 центнер çĕрулми, 46 центнер аш-какай пама тата заем укçине тÿлесе татма пулни лайăх кăтартса пачĕ.

Политрук Р. ШАШКОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Пĕлтерÿ

Апрелĕн 24-мĕшĕнче каçхине 8 сехетте 30 минутăра Хĕрлĕ Çар Çуртĕнче докладчиксемпе агитколлективсен руководителĕсем валли инструкциллĕ доклад пулать. Докладăн теми:

«Майăн 1-мĕшĕ—фашистла захватчиксене хирĕç кĕрешмелли тата вĕсене çĕмĕрсе тăкма ирĕклĕхе юратакан халăхсен вăйне мобилизацилемелли кун».

Докладчик—политрук Мешнин юлташ.

ВКП(б) Хула Комитечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 107

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: